20-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ДЕКАБРЬ 18 ШАМАТКУН 249(6486) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Харьков хулипе Харьков облаçĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСĔ

ХАРЬКОВ, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, Харьков хулинче, Украинăри 4-мĕш фронтăн Военнăй Трибуналĕнче юстици генерал-майорĕ **А. Н. Мясников** юлташ председатель пулса тăнипе тата государственнăй обвинитель юстици полковникĕ **Н. К. Дунаев** юлташ хутшăннипе çак ĕçе—нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Харьков хулипе Харьков облаçĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем çинчен калакан ĕçе пăхса тухма тытăннă.

Çак ĕçпе СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1943 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх пăхнă преступленисемшĕн айăпласа çак çынсене суд аллине панă: Германин хирти вăрттăн полицийĕн 560-мĕш группинчи чиновникĕ — пулăшакан полицин старши ефрейторне **Рецлав** Рейнгарда, Германин çар контрразведкин офицерне **Лангхельд** Вильгельма, СС «СД зондеркоманда» ротин командирĕн заместительне, СС унтерштурмфюрерне **Риц** Ганса тата вĕсене пулăшакана, Тăван çĕршыва сутакана, **Буланова**, Харьковри «СД зондеркомандăра» шофер пулса ĕçленĕскере.

Суд ларăвĕн ĕçĕсене суд медицинин экспертизи хутшăнать, унта çак çынсем тăраççĕ: СССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕн суд медицинин главнăй экспертĕ, суд медицинин наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ **В. И. Прозоровский** юлташ, Мускаври 2-мĕш медицина институчĕн суд медицини кафедрин профессорĕ **В. М. Смольянинов** юлташ, суд медицини институчĕн аслă научнăй сотрудникĕ **П. С. Семеновский** юлташ, Украинăри 2-мĕш фронтăн суд медицинин главнăй экспертчĕ, медицина службин майорĕ **М. П. Притворов** юлташ, суд медицинин эксперчĕ, медицина службин майорĕ **Г. И. Городниченко** юлташ тата патолог-анатом медицина службин майорĕ **Д. Е. Якаш** юлташ.

Айăплисене суд уйăрса лартнă тăрăх çак адвокатсем — **Н. В. Коммодов**, **С. К. Казначеев** тата **Н. П. Белов** юлташсем хӳтĕлеççĕ.

Айăплисемпе свидетельсене малтанлăха ыйтса пĕлнĕ хыççăн, суд айăпласа çырнине вуласа парать. Ăна суд секретарĕ — юстици капитанĕ **Кондыбин** юлташ вуласа парать.

Аяларахра айăпласа çырнин текстне пичетлетпĕр.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Харьков хулипе Харьков облаçĕнче тунă тискер ĕçсемшĕн

АЙĂПЛАСА ÇЫРНИ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ совет территорийĕнчен хăваласа кăларса пынăçемĕн, нимĕç çарĕсем тăвакан пысăкрах та пысăкрах тискер ĕçсем палăрса пыраççĕ.

Харьков хулипе облаçне нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн нимĕçсем мирлĕ совет гражданĕсене, çав шутра хĕрарăмсене, старики сене тата ачасене, тискеррĕн пĕтерсе пынине кăтартакан фактсем питĕ нумай тупнă.

Нимĕçсен фашистла çарĕсем, хăйсен начальникĕсем ертсе пынипе, темиçе вунă пин совет çыннине ятарласа тунă газлă машинăсенче—«душегубкăсенче» чыхăнтарса вĕлернĕ, çакса вĕлернĕ, пере-пере вĕлернĕ тата асаплантарса вĕлернĕ, государство, хуçалăх, культура тата общество организацийĕсен пурлăхĕсене çаратса пĕтернĕ, хули-хулипе тата темиçе пин яла çунтарса янă, ишсе пĕтернĕ, темиçе çĕр пин мирлĕ çынна нимĕç чуралăхне хăваласа кайнă.

Çак тискер те ирсĕр ĕçсем вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăман уйрăм ĕçсем мар, вĕсем йышлă преступленисен пĕр пайĕ пулса тăраççĕ. Çав ĕçсене нимĕç захватчикĕсем Германи правительстви тата нимĕç çарĕн верховнăй командованийĕ хушнă тăрăх туса пынă тата халĕ те туса пыраççĕ.

Нимĕç фашисчĕсен пуçлăхĕ Гитлер вăрçă пуçланиччен нумай малтанах, Европăна чуралантармалли плансем çинчен каласа, славян халăхĕсене—вырăссене, украинецсене, поляксене, чехсене тата ыттисене те—вĕлерсе пĕтерме кирлине кăтартса панă.

Гитлерăн чи çывăх помощникĕ Геринг, хăйĕн хуçи кăтартса панине пурнăçа кĕртсе пырса, нимĕçсене совет гражданĕсене вĕлерсе пыма чĕннĕ.

Фашистсен руководителĕсем çавăн пек çынçиенле кăтартса панисем — нимĕç çарне вĕрентсе хатĕрлемелли никĕс пулса тăнă, халĕ те çавăн пек никĕс пулса тăраççĕ. Çавăн пек вĕрентнине пула нумай юн юхнă ĕнтĕ.

Гитлерăн славян халăхĕсене вĕлерсе пĕтермелли планĕсене пурнăçа кĕртмешкĕн Германи командованийĕ хăйĕн çар шкулĕсемпе училищисенче совет çыннисене вĕлерсе пĕтерме кирли çинчен калакан хăйне уйрăм лекцисем вулама хушнă.

Çапла, акă, Германи çарĕн çак ĕçпе айăпланакан старши ефрейторĕ **Рецлав** Рейнгард, «Альтенбург» ятлă уйрăм батальонра вĕренсе тухнăскер, следствире çапла каласа панă:

«Курсра ГФП-н (Германин вăрттăн ĕçлекен хирти полицийĕн) ертсе пыракан чиновникĕсем те темиçе лекци вуласа панă. Вĕсем тӳрех çапла калатчĕç: Совет Союзĕнчи халăхсем, уйрăмах та вырăссем, чăн-чăн çынсем пулса тămаççĕ, çавăнпа вĕсенчен пысăк пайне вĕлерсе пĕтермелле, пĕчĕк пайĕсене вара нимĕç помещикĕсен чурасем вырăнне усă курмалла.

Çакăн пек кăтартса панисем вĕсем оккупациленĕ территорисенчи халăхсем тĕлĕшпе Германи правительстви йышăннă политикăран тухса тăнă. Калас пулать, Германи çарĕнчи кашни çын, çав шутра эпĕ те ĕнтĕ, хăйĕн ĕçĕнче çав кăтартусене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пынă».

(2-мĕш том, ĕçĕн 67-мĕш листи).

Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçлансан, нимĕç çарĕсем çав кăтартусене Совет Союзĕн вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенче пурнăçа кĕртме пуçланă.

Пирĕн Тăван çĕршывăн территорине кĕрсе кайсан, совет халăхĕ пур çĕрте те хăйсене хирĕç тăнине курсан,—нимĕçсен фашистла çарĕсем тата Германин карательнăй органĕсем пĕр айăпсăр совет çыннисене çаратма тата вĕлерме тытăннă.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тыткăна илнĕ оберштурмбаннфюрер **Хейниш** Георг, Гесс штабĕн начальникĕн заместителĕ пулнăскер, вăхăтлăха оккупациленĕ совет территорийĕнче Мелитополь хулин окружной комиссарĕ пулса ĕçленĕскер, 1923-мĕш çултанпа национал-социалистсен партийĕнче тăнăскер допросра çапла каласа панă:

«1942-мĕш çулхи августăн варринче Ровно хули çывăхĕнчи пĕр поселокра Украинăри 28 окружной комиссарăн конференцийĕ пулса иртрĕ.

Çав конференцие Украинăн имперски комиссарĕ Кох ертсе пычĕ.

Окружной комиссарсен докладчĕсенчен çакă курăнчĕ: халăх Германие ĕçлеме яма ирĕксĕр мобилизацилеиие хирĕç тăрать.

Çавăнпа Кох калăха хытăрах тыткалама кирли çинчен каларĕ, темиçе пин çын ытларах вĕлересси умĕнче чарăнса тămалла мар, терĕ.

Вăл çапла каларĕ: ĕçлеме пултаракан çынсене Çурçĕр Украинăри районсенчен Германие май килнĕ таранах нумай яма тата çав районсенчи ытти çынсене пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтерме шут тытрăм терĕ, мĕншĕн тесен çав районсенче партизансен никам тытайми темиçе отрячĕ кĕрешнĕ; мирлĕ халăха ĕлĕкхи пек çеç тискеррĕн тыткалани — ялсене çунтара-çунтара яни, çынсене йышлăн пере-пере вĕлерни, çав районсенчи халăха вĕлерсе пĕтерни, Кох каланă тăрăх, çителĕклĕ результатсем паман.

Совет Российинчи граждансене нумайтарах вĕлерни Германишĕн усăллă çеç пулма пултарать, мĕншĕн тесен вăл Российăна вăйсăрлатать.

Кохăн çак юлашки сăмахĕсем Гитлерпа унăн ставкин политикине палăртса тăраççĕ. Çав политикăна Германи командованийĕ каялла чакнă чухне уйрăмах тискеррĕн, нимрен вăтанмасăр пурнăçа кĕртсе пырать. Ун чухне вара халăх пурăнакан мĕнпур пунктсене пĕтĕмпех ишсе хăвараççĕ, ырănти халăха ирĕксĕрлесе нимĕçсен тылне куçараççĕ.

Тыла куçса кайма килĕшмен çынсене çавăнтах персе вĕлереççĕ.

Нимĕçсем хăваласа каякан ачасем, стариксем тата хĕрарăмсем выçăпа аптăраса вилеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене никам та апат çимĕç памасть, вĕсем тата чирлесе асапсем курса вилеççĕ. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек хăтланнин тĕллевĕ пĕрре анчах: большевиксем ĕç вăйĕ ан илччĕр тата хăйсен çарне çĕнĕ çынсем илме ан пултарччăр тесе, совет çыннисене мĕн май килнĕ таранах нумай вĕлересси пулнă».

(3-мĕш том, ĕçĕн 9—10-мĕш листисем).

Следстви çакна палăртнă: нимĕçсем Харьков хулипе облаçне йышăнса тăнă вăхăтра тунă тискер ĕçсене, çынсене пусмăрланине тата çаратнине, — çаксене Германи çарĕн офицерĕсемпе салтакĕсем тунă; уйрăмăн илсе кăтартсан, çаксем тунă:

СС «Адольф Гитлер» дивизийĕ, ăна СС çарĕсен обергруппен-фюрерĕ **Дитрих** ертсе пынă;

СС «Вилнĕ пуç» дивизийĕ, ăна СС çарĕсен группенфюрерĕ **Симон** ертсе пынă;

Германин çак карательнăй органĕсем:

Харьковри «СД зондеркоманди», унăн начальникĕ штурмбаннфюрер **Ханебиттер** пулнă;

Германин Харьков хулинчи вăрттăн ĕçлекен хирти полицийĕн группи, ăна полици комиссарĕ **Каган** тата унăн заместителĕ—полици секретарĕ **Вульф** ертсе пынă;

Германин 6-мĕш армийĕн штабĕ çумĕнчи ГФП-н 560-мĕш группи, ăна полици комиссарĕ **Мериц** ертсе пынă;

Çак ĕçпе айăпланакан çынсем:

Рецлав Рейнгард, Германин вăрттăн ĕçлекен хирти полицийĕн 560-мĕш группин чиновникĕ;

Лангхельд Вильгельм—Германин çар контрразведкин капитанĕ;

Риц Ганс — СС «СД зондеркоманда» ротин командирĕн заместителĕ;

нимĕçсене пулăшса тăнă, Тăван çĕршыва сутнă çын:

Буланов Михаил — Харьковри «СД зондеркомандăн» шоферĕ.

Малтан йĕрлесе пĕлсе, çакăн пек система пулнине палăртнă:

темиçе пин совет çыннине «душегубка» текен ятарласа тунă автомашинăсенче углерод йӳçĕкĕпе чыхăнтарса вĕлернĕ;

мирлĕ совет çыннисене тискеррĕн тыткаланă тата вăхăтлăха оккупациленĕ территорисенчи хуласемпе ялсене пĕтере-пĕтере тăкнă;

стариксене, хĕрарăмсене тата çамрăк ачасене йышлăн вĕлерсе пынă;

аманнă тата тыткăна лекнĕ совет çыннисене пере-пере вĕлернĕ, çунтара-çунтара янă тата мăшкăлланă.

Çапла туни вăл вăрçă вăрçмалли правилăсене, пĕтĕм тĕнчери килĕшӳсенче кăтартнăскерсене, тата пурте йышăннă правăсене чăтма çук пăсни пулса тăрать.

I.

Нимĕç оккупанчĕсем Краснодар хулинче тунă тискер ĕçсене 1943-мĕш çулхи июль уйăхĕнче йĕрлесе тухса, следстви çакна палăртнăччĕ: «душегубка» текен ятарласа тунă автомашинăсем пулнă, çав автомашинăсенче Германин карательнăй органĕсем мирлĕ совет гражданĕсене углерод йӳçĕкĕпе чыхăнтарса вĕлернĕ.

Краснодар хули патĕнче танксене чарма тунă шăтăкра тупнă вилĕсене тĕплĕн пăхса тухса, судпа медицина экспертизи хăйĕн 1943-мĕш çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче çырса панă хутĕнче çапла каланăччĕ:

«Судпа медицина енчен пăхса тухса — ӳт, тутасен лăймака тирĕ, ӳт мышцисем, чĕрен, варăн, пыршăсен, хырăмлăхăн, пӳрен тата хăшпĕр ытти шалти органсен (сăмахран: ӳпкесен, чĕрен) çийĕсем шупка-хĕрлĕ, хĕрлĕ тата питĕ хĕрлĕ пулни тăрăх, тата юна, юн шĕвекне тата судпа медицина комиссийĕ пăхса тухнă чухне вилĕсенчен касса кăларнă органсен татăкĕсене хими енчен тĕпчесе пăхса тата спектроскоппа пăхса, çакна пĕлнĕ: тĕпчесе пăхнă 623 вилĕрен 523-шне углерод йӳçĕкĕпе вĕлернĕ».

(4-мĕш том, ĕçĕн 77—78-мĕш листисем).

Йĕрлесе пĕлнĕ тăрăх, нимĕçсем мирлĕ совет гражданĕсене вĕлермешкĕн «душегубка» тесе ят панă çавăн пек «газлă автомобильсемпе» Краснодартан пуçне тата Харьков хулинче те усă курнă.

Çак ĕçпе айăпланакан нимĕçсем тата нимĕçсем тунă тискер ĕçсене курнă çынсем каланă тăрăх, çав машинăсем вĕсем хупă та пысăк автомашинăсем, дизель-моторпа çӳрекенскерсем, пулнă.

Çав автомашинăсен шал енне цинкланă тимĕр листасем çапса тухнă, хыçалта ик еннелле уçăлакан алăк пур, вĕсем сывлăш тухми тачă хупăнаççĕ. Машина урайне йывăç решетке хунă, решетке айĕнче нумай шăтăклă труба выртать, çав труба моторăн тĕтĕм кăларакан трубипе пĕрлешсе тăрать.

Дизель-моторта пулнă газсем, питĕ вăйлă углерод йӳçĕкĕпе хутшăннăскерсем, автомашинăн çынсем ларакан пайне пыраççĕ те унта питĕрсе лартнă çынсене питĕ час чыхăнтарса вĕлереççĕ.

Германи çарĕн çак ĕçпе айăпланакан старши ефрейторĕ **Рецлав** Рейнгард, Германин Харьков хулинчи вăрттăн ĕçлекен хирти полицийĕн группин чиновникĕ, совет çыннисене газлă автомобильсемпе — «душегубкăсемпе» усă курса вĕлерес ĕçе тӳрех хутшăннăскер, çапла каласа панă:

«Çынсене йышлăн çакса тата персе вĕлерни карательнăй органсем умне лартнă задачăсене питĕ нумай вăхăт хушши аппалансан çеç пурнăçлама май панă пек тунă Германи командованине. Çавăнпа халăха çăмăлтарах майсемпе вĕлермелли çинчен шухăшламалла пулнă. Çавăн пек майсене шыраса тупнă та вара.

1942-мĕш çулхи мартăн малтанхи кунĕсенче эпĕ тĕрмене пытăм та çакна куртăм: картишĕнче хура-кăвак тĕслĕ пысăк автомашина ларать, ун патĕнче темиçе полицейски тем аппаланса тăраççĕ; автомашини тĕрме хапхи патĕнчех тăрать, хыçалти алăкĕ уçă.

Çав полицейскисем хушшинче эпĕ СД-н хам пĕлекен сотрудникне Каминские куртăм (вăл Берлинра пурăннă нимĕç, вăрçăччен СС отрядĕнче тăнă). Эпĕ унтан: мĕнле машина ку, мĕн валли тунă ăна?—тесе ыйтрăм.

Каминский çапла каларĕ: ку вăл —«газлă автомобиль», ăна çынсене вĕлерме тунă, терĕ.

Каярахпа эпĕ çав машина мĕнле ĕçленине темиçе хут та куртăм, Харьковри тĕрмере ларакан çынсене çав машина çине лартма полицейскисене хам та темиçе хут та пулăшнă. Эпĕ çав газлă автомобиль хăйĕн ĕçне тума питĕ юрăхлине вара лайăх пĕлсе çитрĕм».

(2-мĕш том, ĕçĕн 68—69-мĕш листисем).

Совет гражданĕсене вĕлермешкĕн нимĕçсем «газлă автомобильсемпе» —«душегубкăсемпе» усă курнине ку ĕçпе айăпланакан çак нимĕçсем те кăтартса параççĕ: унтерштурмфюрер **Риц** Ганс—СС ротин командирĕн заместителĕ, Германи çарĕн капитанĕ **Лангхельд** Вильгельм—çар контрразведкин офицерĕ, Тăван çĕршыва сутнă **Буланов** Михаил — Харьковри «СД зондеркомандин» шоферĕ, çавăн пекех тата çак свидетельсем те кăтартса параççĕ: нимĕçсем—оберштурмбаннфюрер **Хейниш** — Мелитополь хулин окружной комиссарĕ, **Кош** Карл — Германин 79-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи рота инженерĕ тата **Бойко** Иван — Харьковри «СД зондеркомандин» шоферĕ.

Свидетель оберштурмбаннфюрер **Хейниш** çапла каласа панă:

«В. СД» (хăрушсăрлăх служби) «газлă автомобиль» текен автомобиль тунă. Тулашĕнчен пăхсан, вăл тĕрме автомобилĕ пекех, анчах унăн хыçалти алăкĕ сывлăш тухми тачă хупăнать тата унта моторан тухакан газсем хăйне уйрăм труба тăрăх çынсем ларакан пӳлĕме кĕреççĕ. Çав машинăна темиçе вунă çын лартаççĕ. Çынсене вара: сире тĕрмене яраççĕ, е вĕсене: сире лагере яраççĕ, теççĕ.

Автомобиль вырăнтан тапранса кайсан, газсем çынсене ларакан пӳлĕме кĕреççĕ те, унти çынсем пурте вилсе каяççĕ».

(3-мĕш том, ĕçĕн 4-мĕш листи).

Çынсене вĕлермелли çак питĕ хăрушă хатĕр çинчен каласа, çак ĕçпе айăпланакан совет гражданĕсене газлă автомобильсенче—«душегубкăсенче» вĕлерни çинчен каласа парать.

Айăпланакан çав нимĕçех — Германи çарĕн старши ефрейторĕ **Рецлав** çапла каласа панă:

«Çав машинăсем çине хĕрарăмсене лартма черет çитсен— питех те хăрушă пулатчĕ вара. Пур хĕрарăмсем те (ачасем çинчен каламалли те çук) кăшкăрса йĕретчĕç, хăйсене хĕрхенме ыйтса, чĕркуçланса ларатчĕç. Хĕрарăмсемпе пĕрле ачасем те йĕретчĕç, вĕсем ширтен, çак тискер ĕçсене тăвакансенчен, хăйсене хĕрхенме ыйтатчĕç. Вĕсене уншăн полицейскисем чышатчĕç, винтовка прикладĕсемпе, пистолет аврисемпе çапатчĕç.

Çавăн пек чухне эпĕ (манпа пĕрле вара ГФП-па СД-н ытти чиновникĕсем те) çав хĕрарăмсен аллисене çыхаттăмăр та вĕсене машина ăшне тĕртсе кĕртсе яраттăмăр.

Ачасене вара кунтан та çăмăлтарах кĕртсе яраттăмăр. Вĕсене аллисенчен тытаттăмăр та (хăш чухне урисенчен тыттатăмăр) сулласа ярса машина ăшне ывăтаяттăмăр.

Çавăн пек тунăшăн нимĕçсене ылханатчĕç, пĕтĕм картиш чĕрене çуракан сасăсемпе, пулăшма тата хĕрхенме тархасласа ыйтакан сасăсемпе тулса ларатчĕ.

Эпĕ пĕррe çакăн пек пулнине астăватăп. СД офицерĕ пĕр ачана укăн амăшĕ умĕнчех çав машина ăшне ывăтса ячĕ. Амăшĕ вара офицер çине сиксе ларчĕ те аллисемпе унăн питне юн тухиччченех чăрмаласа пĕтерчĕ.

Çавăн пек пăрăнман çынсене (арестленисене) нумай чухне çавăнтах персе пăрахатчĕç те машина ăшне ывăтса яратчĕç».

(2-мĕш том, ĕçĕн 94—95-мĕш листисем).

Свидетель Иван Семенович **Бойко**, Харьковри «СД зондеркомандин» шоферĕ пулса ĕçленĕскер, çавна пула вара нимĕç фашисчĕсем тунă тискер ĕçсене нумайĕшне хăй куçĕпе курнăскер, çапла каласа панă:

«Хăйсене улталанине, вĕлерме хатĕрленнине пĕлсен, чирлисем çав машинăсем çине лартнă чухне хирĕç тăратчĕç, анчах та гестаповецсем вĕсене çав «газвагенсене» прикладсемпе тата патаксемпе çапа-çапа хăваласа кĕртетчĕç, арестленисенчен сывăраххисене — утма пултарайманнисене машина ăшне сĕтĕрсе кĕртме хушатчĕç.

Машина ăшĕнчен пулăшма ыйтнă сасăсем, хĕрарăмсем макăрни илтĕнетчĕ.

«Газвагена» чирлисене тата вĕсене турттаракан çынсене 50 çынна яхăн лартсан, машина алăкне хупрĕç те, машина вара хула тулашнелле тухса кайрĕ».

(3-мĕш том, ĕçĕн 37-мĕш листи).

Свидетельница Ульяна Никитична **Подкопай**, Харьков хулинче Рыбная урамĕнче пурăнаканскер (çав урамра гестапон «душегубкăсем» тăракан гаражĕ пулнă) çапла каласа панă:

«Арестленисем хушшинче арçынсем, хĕрарăмсем тата ачасем те пурччĕ, вĕсене гестаповецсем чышса, прикладсемпе хĕнесе, машина çине лартатчĕç. Нумайĕшĕн пичĕсем çинче кăвакарнă вырăнсем, юн пĕвеннĕ тĕлсем пурччĕ, тумтирĕсем çуралнăччĕ. Хĕрарăмсемпе ачасем йĕретчĕç, анчах гестаповецсем вĕсене ярса илетчĕç те вăйпах машина ăшне тĕртсе кĕртетчĕç.

Автомашинăна çын лăках тулсан, ăна хупма хатĕрленнĕ вăхăтра икĕ гестаповец картишне пĕр йĕрекен хĕрарăма тата унпа пĕрле 8 çулхипе 10 çулхи икĕ хĕре илсе кĕчĕç.

Пĕр хĕрĕ, картишĕнче мĕн пулнине ăнланаймасăр, васкаса, амăшне: «Анне, часрах ут, атту машина пире лартмасăрах кайĕ», тесе кăшкăрма тытăнчĕ.

Машина патне пырсан çав, хĕрарăм унта кăшкăрнине, йынăшнине илтрĕ те тата хытăрах йĕрсе ячĕ, утма чарăнчĕ, анчах çав вăйпах машина ăшне тĕртсе кĕртсе ячĕç.

Унăн хĕрĕсенчен пĕри çав вĕçкăтăр йĕрсе ячĕ: «Анне, анне», тесе кăшкăрчĕ.

Вĕсемпе юнашар тăракан гестаповецсем çав хĕрсене инкĕшне хăваласа кăларчĕç те машина ăшне, хăраните çав анне машина патне, ывăтса ячĕç. Çакăн хыççăн вара машинăн алăкне хупрĕç те, машина тĕрме картишĕнчен тухса кайрĕ».

(2-мĕш том, ĕçĕн 182-мĕш листи).

Малтан йĕрлесе тухса тата çакна палăртнă: совет çыннисене «душегубкăсенче» вĕлернĕ хыççăн нимĕç захватчикĕсем вĕсен виллисене Харьков тулашне илсе кайнă, унта вĕсене пушă бараксене тата ытти çурри ишĕлнĕ çуртсене пăрахнă, унтан вара вĕсене бензин сапса çунтарса янă.

Айăпланакан — Германи çарĕн старши ефрейторĕ **Рецлав** çак ыйтупа çапла каласа панă:

«1942-мĕш çулхи мартăн вĕçĕнче эпĕ çынсене «газлă автомобиль» çине лартнă çĕрте пултăм, çав ĕçе тума пулăшрăм. Унтан мана Ханебиттер çав машинăсене пушатмалли вырăна çитиччен ăсатма хушрĕ. Хула витĕр тухсан, эпир Харьковри трактор завочĕн баракĕсем тĕлне çитрĕмĕр те чарăнтăмăр. СД командин начальникĕ Ханебиттер пирĕнпе пĕрле пынă «зондеркоманда» салтакĕсене çав вилĕсене машинăсенчен кăларса пĕр барак коридорне пăрахма хушрĕ. Çав коридорта (эпĕ ăна хам куçпа хам куртăм) нумай вилĕ выртатчĕ, вĕсене маларах илсе килсе пăрахнă пулмалла. Машинăсене пушатса пĕтерсен, Ханебиттер пĕр грузовик сĕр пуçне ыттисене пурне те аякалла илсе кайса тăратма хушрĕ. Хăварнă грузовик çинче «зондеркоманда» салтакĕсем ларатчĕç.

Ханебиттер хушнипе, салтаксем çав грузовик çинчен бензин тултарнă темиçе савăт илчĕç те барака кĕрсе кайрĕç. Унта вĕсем вилĕсене бензин сапрĕç, унтан, баракран тухса, барака та хăшпĕр тĕлте бензин сапрĕç те вут тивертсе ячĕç».

(2-мĕш том, ĕçĕн 95—96-мĕш листисем).

«Газлă автомобильсенче» — «душегубкăсенче» вĕлернĕ çынсен ӳчĕсене нимĕçсем Харьковри трактор завочĕн баракĕсенче çунтарса янине, айăпланакан **Рецлавсăр** пуçне, тата çак свидетельсем кăтартса параççĕ: Данил Александрович **Серков**, Порфирий Иосифович **Ризван**, çавнах тата судпа медицина экспертизи те. Харьков хулипе унăн таврашĕнчи вырăнсенче чавса кăларнă вилĕсене тĕпчесе пăхнăскер, кăтартса парать.

Харьковри трактор завочĕн баракĕсенче вилĕсене мĕнле çунтарнине тата çунтарнă вырăнтан чавса кăларнă çын юлашкийĕсемпе шăммисене тĕпчесе пăхсан, судпа медицина комиссийĕ 1943-мĕш çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче çапла çырса панă:

«Харьковри трактор завочĕн çунса кайнă темиçе баракĕн территорине пăхса тухсан, çынсен тулашĕнчен çуннă шăммисене тата япалапа перĕсе сиенлемен пуç шăммисене чылай тупнă.

Çунса кайнă барак çывăхĕнчи пĕр çурăкра (бомбăсем лекесрен пытанма тунă çурăксенчен пĕрне) чавса пăхсан, унта кĕлпе çĕр тата çӳпçапсем хушшинче тулашĕнчен çуннă çын шăммисене (хулпуççи шăммисене, аяк пĕрчисене, çурăм шăммисене), тата япалапа персе сиенлемен пуç шăммисене тупнă.

Кунсăр пуçне, çуннă тумтирсен татăкĕсене, кашăксем, котелоксем, хĕрарăм сумкин çăрине тата ытти япаласем те тупнă».

Тискер ĕçсем тунăшăн, совет çыннисене ятарласа тунă автомашинăсенче вĕлернĕшĕн ответ тыттарасси çинчен хăраса, нимĕç фашисчĕсем юлашки вăхăтра çынсене вĕлермелли çав хатĕрпе усă курнине пытарма тăрăшаççĕ.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Харьков хулипе Харьков облаçĕнче тунă тискер ĕçсемшĕн
АЙĂПЛАСА ÇЫРНИ

Юлашки

Оберштурмбаннфюрер Хейниш допросра çапла каласа панă: 1942-мĕш çулхи июль уйăхĕнче Таври облаçĕнчи 5 окружной комиссарăн хупă канашлăвĕнче СД-н тата гестапон Крымпа Таврири начальникĕ — полици генерал-лейтенанчĕ фон-Альвенслебен сăмах тухса калянă. «Газлă автомобильсем» пурри çинчен пĕлнĕ çынсем пакăлтатнине Гитлер питĕ юратмасть. Çапла пакăлтатнине пула, тенĕ фон-Альвенслебен, çавăн пекех тата СД-па гестапон уйрăм руководителĕсем лăплаксалярнине пула, «газлă автомобильсем» çинчен калакан материалсем вырăссен аллине лекнĕ.

Çавăнпа, Хейниш каланă тăрăх, фон-Альвенслебен комиссарсене Гитлер çавăн пек пакăлтатса çÿреме чарăнма тата «газлă автомобильсемпе» вăрттăн усă курма хушни çинчен каласа панă. (3-мĕш том, ĕçĕн 5-мĕш листи).

II.

Мирлĕ совет гражданĕсене мĕнле те пулин ытларах вĕлерсе пĕтерме тăрăшса, нимĕç захватчикĕсем, «газлă автомобильсемпе» — «душегубкăсемпе» вĕлернисĕр пуçне, совет çыннисене массăллăн пере-пере пăрахнă, çака-çака вĕлернĕ, ытти тĕрлĕ майсемпе асаплантарса вĕлернĕ.

Çак ĕçпе айăпланакансем — Рецлав, Риц, Лангхельд тата Тăван çĕршыва сутнă Буланов кăтартса панă тăрăх, мирлĕ совет гражданĕсене тăтăшах массăллăн тыта-тыта хупнипе гестапон тата Германин ытти карательнăй органĕсен тĕрмисем ним айăпсăр совет çыннисемпе тулса ларнă.

Фашистсен карательнăй органĕсен чиновникĕсем арестленĕ кашни çынна, унăн пирки мĕнле те пулин материал пуррипе çуккине пăхмасăрах, допроссенче этемле мар асаплантарнă, шомполсемпе, резина чукмарсемпе, чăпăркасемпе тата патаксемпе хĕненĕ, çапла майпа вĕсем çав çынсенчен «показанисем» илнĕ.

Çынсенчен нумайĕшĕсем, вĕсене çав тери хĕнесе пĕтернĕ пирки, допросрах виле-виле кайнă.

Нимĕç ирсĕрĕсем совет ачисемпе çамрăкĕсене асаплантарни уйрăмах хăрушла пулнă. Нимĕçсем пĕчĕк ачасене чĕрĕллех лакăма пăрахса çĕр айне пытарса хунисем те сахал мар пулнă.

Харьков хулинче, гестапо хушнă тăрăх, мирлĕ совет гражданĕсене нумайĕшĕсене хулари хваттерсенчен кăларса, Харьковри трактор заводĕнчи рабочи городокăн территорийĕ çинчи ятарласа уйăрнă бараксене вырнаçтарнă.

Айăпланакан Буланов кăтартса панă тăрăх, çынсене хулари хваттерсенчен çав рабочи поселока куçарнă чухне, совет гражданĕсене нимĕç салтакĕсемпе гестапо сотрудникĕсем час-часах çаратнă тата ирсĕррĕн мăшкăлланă.

Куçарса каякан çынсене пурне те бараксене вырнаçтарса тухнă хыççăн, нимĕçсем çынсене 200—300-шер çынран тăракан ушкăнсене уйăрма тытăннă. Çав ушкăнсене çамрăксемпе пĕчĕк ачасем тата ватă çынсем те кĕнĕ. Ун хыççăн вара вĕсене инçетри тыла илсе каям-лекки туса, Харьковри трактор завочĕн рабочи городокĕнчен 4—5 километрта выртакан вара илсе кайнă та вĕсене малтанах чавса хатĕрленĕ пысăк лакăмсем умĕнче пере-пере пăрахнă.

1941-мĕш çулхи декабрь уйăхĕнче гестаповецсем Харьковри больницăра выртакан 900 совет гражданне персе пăрахнă, вĕсен хушшинче ачасемпе ватă çынсем нумай пулнă. Вĕсене Харьков хулинчен 4—5 километрта, Чугуев еннелле каякан çулран инçех те мар вырăнта, пере-пере пăрахнă. Виленĕ çынсемпе икĕ пысăк лакăма тултарса лартнă. Лакăмсене малтанах çав шутпа хатĕрлесе хунă пулнă.

Совет çыннисене персе пăрахнă чухне çавăнта пулнă айăпланакан **Буланов** çапла кăтартса пачĕ:

«Мана вунçĕ тонна турттакан автомашинăпа Харьков хули хĕррипче ларакан больница патне кайма хушрĕç. Эпĕ пынă чухне унта ытти машинăсем те пурччĕ. Эпĕ хамăн машинăна больница корпусĕсенчен пĕрин алăкĕ умне пырса тăратсанах, гестаповецсем чирлĕ çынсене аялти кĕпе-йĕм вĕççĕнех иле-иле тухса, вĕсене машина çине тиеме тытăнчĕç. Кашни машинăна 40 çынна яхăн тиерĕç.

Хамăн машинăна тиесен, эпĕ çынсене персе пăрахакан вырăна илсе кайрăм. Вăл вырăна гестаповецсем çавăрса илнĕччĕ.

Унта чирлĕ çынсене машинăран турта-турта антарчĕç те лакăм патне пырса тăратрĕç. Машинăсене пушатнă чухне чуна пырса тивекен сасăсем, макăрнисем, пысăккисемпе ачасем, чирлĕ çынсем хĕрхенме ыйтса йынăшнисем илтĕнетчĕç. Анчах та гестаповецсем çакăн çине нимĕн те çавăрăнса пăхмарĕç, çынсене пурне те пере-пере пăрахса, лакăмалла ывăтрĕç.

Эпĕ çакна астăватăп: гестапо шефĕ Берг Ганс тата медфельдшер Алекс [illegible] пыркалатчĕç. Вĕсем [illegible] шĕ те хăйсене хирĕç тăракан çынсене ураран çапса ÿкеретчĕç те лакăма пăрахатчĕç, унтан вара персе вĕлеретчĕç.

Хирĕç тăракан хăшпĕр çынсем, лакăма пăрахнăскерсем, аманнă кăначчĕ. Юнланса пĕтнĕскерсем, вĕсем ура çине тăма пикенетчĕç. Вĕсене татах ураран çапса ÿкеретчĕç те, унтан вара çав тискер ĕçе туса пыракансенчен пĕри — гестапо шефĕ тата тăлмачи Берг Ганс хушнă тăрăх, çав çынсене чĕрĕллех çĕр айне пытарчĕç.

Лакăма чĕрĕллех пытарса хăварнисем хушшинче çамрăксемпе пĕчĕк ачасем нумай пулнă». (2-мĕш том, ĕçĕн 255—256-мĕш листисем).

Харьков хули хĕрринчи Сокольники ятлă поселок районĕнче вырнаçнă вăрман паркĕ виле тăприсемпе витĕннĕ. Унта нимĕçсен фашистла палачĕсем вĕлернĕ çынсене пытарнă.

Совет çыннисене çав вăрман паркĕнче тискеррĕн пере-пере пăрахни çинчен каласа парса, Александр Филиппович Беспаловпа Дарья Васильевна Даниленко свидетельсем, Сокольники поселокĕнче пурăннăскерсем тата нимĕçсен тискер ĕçĕсене ирĕксĕрех хăйсен куçĕсемпе курнăскерсем, çакна кăтартса пачĕç: 1942—1943-мĕш çулсем хушшинче кашни кун нимĕç фашисчĕсем, совет çыннисене темиçе машинăпа вăрман паркне илсе пырса, вĕсенчен унта тискеррĕн мăшкăлланă, асаплантарнă, унтан пере-пере пăрахнă. Тыткăнри çынсенчен хăшĕ-пĕрисем нимĕçсем çине ыртăннă, анчах вĕсене çавăнтах ураран çапа-çапа ÿкерсе штыксемпе чике-чике пăрахнă, урапа тапса хĕненĕ, прикладсемпе çапнă.

Вăрманта чуна пырса тивекен кăшкăрнă сасăсем, вилекен çынсем йынăшнисем илтĕнсе тăнă. Уйрăм çынсем вилес умĕн питĕ асапланнă, вĕсене çапнипех нимĕç палачĕсем лакăмсене пăрахнă.

Çавăн пек тискер асаплантарнине Беспалов свидетель çапла кăтартса пачĕ:

«Иртнĕ çулхи июнь уйăхĕн вĕçĕнче çав вăрман паркне 10—12 грузовой автомашинăпа 300 хĕрпе хĕрарăма илсе пынине эпĕ хам куçпа куртăм.

Телейсĕр çынсем енчен-енне ывтăнатчĕç, макăратчĕç, хăйсен çÿçĕсемпе тумтирĕсене тăпăлтаратчĕç, нумайĕшĕсем тăнсăр пулса кайса ÿкетчĕç, анчах нимĕç фашисчĕсем çакăн çине çавăрăнса та пăхмасчĕç. Урапа тапса, прикладсемпе тата патаксемпе çапса, хĕрарăмсене ура çине тăрататчĕç, анчах ура çине тăрайманнисенне палачсем тумтирĕсене хăйсем тăпăлтарса илетчĕç те çынсене лакăма пăрахатчĕç. Ачасем çавăтнă темиçе хĕрарăм тарма хăтланчĕç, анчах вĕсене вĕлерчĕç.

Автоматран пĕр черет пенĕ хыççăн хăшпĕр хĕрарăмсем сулкаланса, вăйсăрланнă аллисене сулкаласа, чуна тивекен сасăпа кăшкăрса нимĕçсене хирĕç утнине эпĕ хам куçпа курнă. Çав вăхăтра нимĕçсем вĕсене пистолетсемпе пере-пере пăрахрĕç... Хăранипе тата хуйхăпа ăсран кайнă ача амăшĕсем, ачисене кăкăр çумне пăчăртаса, хăрушла çухăрса уçланкă тăрăх чупатчĕç, вĕсем çăлăнăç шыратчĕç.

Гестаповецсем вĕсенчен ачисене турта-турта илсе, вĕсене урисенчен е аллисенчен тытса чĕрĕллех лакăма пăрахатчĕç, амăшĕсем вĕсем хыççăн лакăм патнелле чупма тытăнсан, вĕсене пере-пере пăрахатчĕç». (3-мĕш том, ĕçĕн 162—163-мĕш листисем).

Вăрман паркĕнче совет çыннисене массăллăн пере-пере вĕлерни çинчен калакан факта çирĕплетсе парса, **Даниленко** свидетель çакна кăтартса пачĕ:

«1943-мĕш çулхи январь уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсем çав вырăнтах икĕ кун хушшинче совет гражданĕсене тата пере-пере пăрахрĕç. Çав икĕ хăрушă кун хушшинче вăрманта пенĕ сасăсем тата çынсем хăрушла кăшкăрнă сасăсем, арçынсемпе хĕрарăмсен, ачасен сассисем илтĕнсе тăчĕç.

1943-мĕш çулхи çуркунне [illegible] çав шăтăксене витме кайрăм. Пирĕн совет çыннисене персе пăрахнă вырăна çитсен, эпĕ икĕ лакăмĕ те персе пăрахнă çынсен виллисемпе туллиех пулнине куртăм. Хулăм мар тăпра сийĕ витĕр çара çын аллисемпе урисем курăнса выртатчĕç». (3-мĕш том, ĕçĕн 152-мĕш листи).

III.

Пĕтĕм тĕнчери право нормисем тыткăна лекнĕ çар çыннисене тискеррĕн тыткалама чараççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери çав положенисем тăрăх, тыткăна лекнĕ çар çыннисене — аманнисемпе чирлисене, вĕсем вăрçакан енĕн аллине лексен, вăрçакан енĕ хÿтĕлеме тивĕçлĕ.

Анчах та, тĕнчери правăсен кирек мĕнле нормисене те сирсе пăрахса, Германин фашистла пуçкасаканĕсем советăн тыткăна лекнĕ аманнă çар çыннисене тăтăшах вĕлерсе пынă тата халĕ те пĕтерсе пыраççĕ.

Кунтан та ытларах, тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсене Германи çарĕн командованийĕ мирлĕ совет гражданĕсене те, Совет Союзĕн вăхăтлăха оккупациленĕ территорийĕ çинче тытса илнĕскерсене, вĕсене тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хурса, хупса лартаççĕ.

Çапла, Германи çарĕн фельдфебелĕ **Янчи Гейнц** свидетель, тыткăна лекнĕ çар çыннисене хупса усрамалли «дулаг — 231» ятлă лагерьти контрразведка офицерĕ çумĕнчи сотрудник, çапла кăтартса пачĕ:

«Германин тыткăна лекнĕ çар çыннисене усрамалли «дулаг—231» ятлă лагерĕнче советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисемсĕр пуçне, Совет Союзĕн оккупациленĕ территорийĕ çинче тытса илсе, Германи командованийĕ тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хунă мирлĕ граждансем те пурччĕ. Çав мирлĕ çынсем хушшинче ватă çынсемпе хĕрарăмсем тата ачасем те пулнă.

Эпĕ çакна пĕлетĕп: Германи çарĕсем оккупациленĕ совет облаçĕсенчен тыткăна илнĕ мирлĕ граждансем пирĕн лагерьте кăна мар, çавăн пекех тата Германин официальнăй йĕркепе «тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсем» тесе чĕнекен ытти лагерьсенче те пулнă.

Мирлĕ совет гражданĕсене тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсене халăха урăх çĕре куçарса каяс сăлтавпа хупаççĕ, хăшпĕр чухне тата Германие ĕç вăйĕ ăсатас сăлтавпа, юлашкинчен тата, нимĕçсене хирĕç тăракан пулас боецсем вырăнне хурса, кăмăллă мар элементсене, вăл шутра ачасемпе çамрăксене те, ирĕкре çÿреме парас мар шутпа хупса хураççĕ». (3-мĕш том, ĕçĕн 38—39-мĕш листисем).

Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене, чирлисемпе аманнисене, гражданла халăха пĕтерсе тăкас шутпа, нимĕçсем госпитальсенчи чирлĕ çынсемпе аманнисем валли, лагерьсенчи тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе мирлĕ граждансем валли тÿсме çук йывăр условисем туса хунă. Совет çыннисене выçăпа асаплантарнă, медицина енчен пулăшу паман. Çынсене пĕр вырăна ытлашши нумайăшарăн хупса усранипе тата чи кирлĕ санитари условийĕсем çуккипе вĕсем хушшинче ерекен чирсем массăллăн саралнă, çавна пула çынсем нумайăшарăн вилсе пĕтнĕ.

Пĕр сăлтавсăрах е тата «айăплакан материалсем» юри туса хатĕрлесе, нимĕçсем тыткăна лекнĕ çар çыннисене, малтан тискеррĕн асаплантарса, мăшкăлласа пĕтернĕ, хăшпĕр чухне вĕсем çине йытăсене вĕçлетсе янă, кайран пере-пере вĕлернĕ е чĕрĕллех çунтара-çунтара янă.

Нимĕçсен çав тискер ĕçĕсене Рицпа Лангхельд айăпланакансем тата нимĕç Янчи Гейнц, профессор Е. С. Катков, врач Г. З. Джинчвиладзе, медицина сестрисем — В. А. Сокольская, М. А. Козлова тата ытти свидетельсем кăтартса пăраççĕ, çавăн пекех тата çав тискер ĕçсем çинчен суд медицинин экспертизи çырнă актсем çирĕплетсе параççĕ.

Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата мирлĕ граждансене нимĕçсен лагерĕсенче этемле мар асаплантарнисем çинчен çак ĕçпе айăпланакан нимĕç çарĕн капитанĕ Лангхельд та, çав мĕнпур тискер ĕçсене хăй тÿрремĕнех хутшăннăскер, кăтартса парать.

Лангхельд çакна кăтартса пачĕ:

«Германи офицерĕсемпе салтакĕсем, вăл шутра эпĕ те, вырăс çыннисене выçăхтарса вĕлерес, начарланса халран кайнă çынсене хĕнесе вĕлерес, персе вĕлерес, йытăсене вĕçлетсе ярса турса çурас тата ытти майсемпе вĕлерес ĕçсене Германи правительстви вырăс çыннисем тĕлĕшпе кăтартса панă тăрăх туса пынă...

Эпĕ хушнă тăрăх, сахал мар çын персе вĕлернĕ. Çапла, сăмахран, 1942-мĕш çулхи май уйăхĕнче Харьков çывăхĕнчи Дергачи ялĕнче, эпĕ хушнă тăрăх, тыткăна лекнĕ вырăс çыннисен ушкăнне, пĕр 20 çынна, вырăнти халăхпа çыхăнса тăраççĕ тесе айăпласа, персе пăрахрĕç... Эпĕ çакна калама тивĕçлĕ: çынсене ун чухне провокациллĕ майпа айăпланă пулнă, мĕншĕн тесен тĕрĕссипе çав çынсене вĕсем вырăссем пулнишĕн кăна вĕлерсе пĕтернĕ.

Вырăс офицерĕсен тепĕр ушкăнне тыткăна лекнĕ çар çыннисене пухса ăсатмалли пунктра 1941-мĕш çулхи кĕркунне персе вĕлернĕ.

Вырăссен вăтамрах 10 офицерне суйласа илсе, эпĕ вĕсене тыткăна лекнĕ мĕнпур çар çыннисен куçĕ умĕнче автоматсенчен пере-пере пăрахма хушрăм. Персе вĕлернĕ çын виллисене малтанах хатĕрлесе хунă лакăмсене пăрахрĕç.

Яланхи пекех, вырăссем çар секречĕсене пĕлтермесчĕç, çавна пула эпĕ тыткăна лекнĕ çар çыннисене 4—5 сантиметр хулăмĕш патакпа хĕнеттĕм, çавăн хыççăн допрос тунă çынсене ман кабинетран час-часах çĕклесе тухма лекетчĕ. Тыткăна лекнĕ çар çыннисене нимĕç çарĕн пур чаçĕсенче те хĕнеççĕ.

...Асапланса пĕтнĕ выçă çынсем çине, вĕсене апат валеçсе панă чухне, конвой салтакĕсем йытăсем вĕçлетсе яратчĕç.

Йытăсем çынсем хушшине кĕрсе каятчĕç те, тыткăнрисен тумтирĕсемпе ÿчĕсене турта-турта çуратчĕç, вĕсенчен хăшпĕрисене çĕр çине пусарса ÿкерсе, кышласа, çĕр тăрăх сĕтĕрсе çÿретчĕç. Йытăсем туртса çурнă, вилес патне çитнĕ тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе гражданла çынсене салтаксем персе пăрахатчĕç те, вĕсене эмеллесе аппаланас мар тесе, карта хыçне кăларса ывăтатчĕç». (2-мĕш том, ĕçĕн 194—195, 211-мĕш листисем).

1943 çулхи март уйăхĕнче нимĕçсем Хĕрлĕ Çарăн тыткăна лекнĕ аманнă боецĕсемпе офицерĕсене 800 çынна персе вĕлернĕ тата çунтарса янă. Вĕсем 69-мĕш армин Харьков хулинчи Тринклер урамĕнче вырнаçса тăракан 1-мĕш армейски сортировочнăй госпиталĕнче выртнă пулнă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен çав тискер ĕçĕсем çинчен каласа парса, профессор **Катков**, врач **Джинчвиладзе**, медсестра **Сокольская** свидетельсем, çав вăхăтра госпитальре ĕçленĕскерсем, çакна кăтартса пачĕç: 1943 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче госпиталь патне «Адольф Гитлер» ятлă дивизири эсэсовецсем ларнă 3 автомашина пырса çитнĕ. Вĕсем 8-мĕш корпуса кĕрекен алăка хупса лартнă та корпус çине вут хыптаракан снаряд пăрахнă. Корпус çунма тытăннă. Вилĕмрен çăлăнас тесе, корпусра пулнă аманнă çынсем çунакан çуртăн чÿречийĕсенчен сикме пуçланă, анчах кунта вĕсене эсэсовецсем автоматсенчен пере-пере пăрахнă.

Тепĕр кунне эсэсовецсен 9 çынтан тăракан ушкăнĕ çав госпитале татах пынă та палатăсенчен медперсонала хăваласа кăларса, госпиталĕн корпусĕнче юлнă мĕнпур аманнă çынсене пере-пере пăрахнă.

Мария Александровна **Козлова** свидетель (унăн упăшкине çак юнлă ĕçе тунă вăхăтра гитлеровецсем тискеррĕн вĕлернĕ пулнă) çапла кăтартса пачĕ:

«Действующи Хĕрлĕ Çарта пулнă чухне манăн упăшка аманнă та ăна вара пĕрремĕш армейски госпитале вырнаçтарнă. Çав госпиталь вăл вăхăтра Харьков хулинче пулнă.

Мартăн 15-мĕшĕнче эпĕ ун патне япаласем пама кайрăм. Госпиталь вырнаçнă тĕле çитсен, эпĕ манăн упăшка выртакан госпиталех иккенне ниепле палласа илеймерĕм.

Манăн куç умне хăрушла картина тухса тăчĕ, унта та кунта ишĕлчĕксем, тискеррĕн çунтарса, асаплантарса вĕлернĕ совет çыннисен виллисем выртатчĕç. Çав хăрушă усал ĕçе курса, эпĕ тăнран кайнă çын пек, вутран сыхланса юлнă 4-мĕш корпус патне чупрăм. Пĕрремĕш палатăна кĕрсен, эпĕ татах та ытларах хăраса ÿкрĕм. Унта пĕтĕмпех лÿчĕркесе пĕтернĕ çын виллисен куписем выртатчĕç. Эпĕ манăн упăшка выртнă кровать патне чупса пытăм — вăл пушах, анчах юнланса пĕтнĕ. Хамăн упăшкан ирсĕрленсе юнланса пĕтнĕ виллине кроватьсем хушшинче йăваланса выртнине куртăм. Унăн пуçне çапса çĕмĕрнĕ, хăрах куçне тĕртсе шă- [illegible] (3-мĕш том, ĕçĕн 146—147-мĕш листисем).

Çапла ĕнтĕ, следстви материалĕсем тăрăх — айăпланакансем тата свидетельсем кăтартса панă тăрăх, çавăн пекех тата суд медицинин экспертизин акчĕсем тăрăх та çакна тупса палăртнă: нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Харьков хулипе Харьков облаçне вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта «газлă автомобильсем» — «душегубкăсем» ăшĕнче пăчăхтарса, çакса, персе пăрахса тата гестапо тĕрмисенче асаплантарса совет гражданĕсене 30.000 çынна ытла вĕлернĕ.

IV.

Çапла вара çакна палăртнă: Харьков хулипе Харьков облаçне вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта нимĕçсен фашистла захватчикĕсем çынсене массăллăн вĕлернĕшĕн, тискер ĕçсем тунăшăн, мирлĕ çынсене асаплантарса пĕтернĕшĕн, вĕлерсе пĕтернĕшĕн, пĕр айăпсăр совет çыннисене, çав шутра хĕрарăмсемпе стариксене тата ачасене пере-пере вĕлернĕшĕн тата ятарласа тунă «душегубка» текен машинăсем ăшĕнче углерод йÿçекĕпе чыхăнтарса вĕлернĕшĕн, çунтара-çунтара янăшăн тата ытти тĕрлĕ майсемпе вĕлернĕшĕн пĕтĕм ответлăх Германин вăрă-хурахла фашистла правительствин руководителĕсем çине тата Германи çарĕн верховнăй командованийĕ çине ÿкет.

Çавăн пекех тата çÿлте асăннă ирсĕр ĕçсене тунă çĕре нимĕçсен çарпа полици тата карательнăй организацийĕсен çак командирĕсемпе начальникĕсем тÿрремĕнех хутшăннине палăртнă:

1. СС «Адольф Гитлер» дивизийĕн командирĕ — обергруппенфюрер Дитрих;

2. СС «Вилĕ пуç» дивизийĕн командирĕ — СС войскисен группенфюрерĕ Симон;

3. Харьковри «СД зондеркомандин» начальникĕ — штурмбаннфюрер Ханебиттер;

4. Германин вăрттăн ĕçлекен полицийĕн Харьков хулинчи группин начальникĕ — полици комиссарĕ Кархан;

5. Германин 6-мĕш çарĕн штабĕ çумĕнчи ГФП-н 560-мĕш группин начальникĕ — полици комиссарĕ Мериц;

6. Германин вăрттăн ĕçлекен полицийĕн Харьков хулинчи группин начальникĕн заместителĕ — полици секретарĕ Вульф.

Çÿлте асăннă çынсем хăйсем тунă ирсĕр ĕçсемшĕн айăплă пулнине пĕтĕмпех çирĕплетсе панă. Çавăнпа та вĕсене пурне те совет территорийĕнче совет гражданĕсем тĕлĕшпе тунă киревсĕр ĕçсемшĕн ССР Союзĕн Уголовнăй законĕсем тăрăх айăпламалла.

Вĕсемпе пĕрле çав пĕтĕм тискер те ирсĕр ĕçсемшĕн, нимĕç çарĕн полици, çар, разведка тата карательнăй органĕсен çак ĕç тăрăх айăплама тăратнă сотрудникĕсем—Рецлав Рейнгард, Риц Ганс, Лангхельд Вильгельм, çавăн пекех тата вĕсене пулăшакан сутăнчăк Михаил Буланов айăплă пулса тăраççĕ.

Асăннă çынсен преступленийĕсем çаксем пулаççĕ:

РЕЦЛАВ Рейнгард, Германин вăрттăн полицийĕн Харьковри чиновникĕ пулса, арестленĕ совет гражданĕсен чылайĕшĕсен ĕçĕсене тĕрĕсленĕ. Çавăн чухне вăл совет гражданĕсене этем тÿсмелле мар асаплантарнă тата вĕсене юриех тĕрĕс мар айăпласа çырнă.

Арестленĕ вунçĕ çын хăйсем Германие хирĕçле ĕçсем тунине йышăнчĕç тесе юриех суйса çырса, çавăнта Харьковри трактор заводĕнче тата Харьков хулинчи электростанцире ĕçлекен 25 рабочин ячĕсене кĕртнĕ.

Вăл хăй те совет гражданĕсене арестленĕ, ун хыççăн вара вĕсенчен 15-шне персе пăрахнă, 10-шне «душегубка» текен машинăсенче чыхăнтарса вĕлернĕ.

Вăл хăй те Совет гражданĕсене пĕр хут кăна мар «душегубка» текен машинăсене хупнă, çапла вара тата 40 çынна çити вĕлернĕ.

Вăл «душегубка» текен машинăсене пушатма Харьковри трактор завочĕн территорине ăсатма кайса, унта чыхăнтарса вĕлернисене çунтарас ĕçе тÿрремĕнех хутшăннă.

РИЦ Ганс, Харьковри «СД зондеркомандин» СС ротин командирĕ пулса, мирлĕ совет гражданĕсене асаплантарнă тата персе вĕлернĕ çĕре хутшăннă.

1943-мĕш çулхи июнь уйăхĕнче Харьков çывăхĕнчи Подворки ялĕн районĕнче ним айăпсăр совет çыннисене массăллăн персе пăрахнă çĕре хутшăннă.

«СД зондеркоманди» арестленисене ыйтса тĕпченĕ çĕре хутшăннă

Германие хирĕçле ĕçсем тунă тесе калаттарасшăн пулса, арестленисене хăех шомполсемпе тата резина туясемпе хĕненĕ.

ЛАНГХЕЛЬД Вильгельм, çар контрразведкин офицерĕ пулса, тыткăна лекнисене тата мирлĕ ĕç çыннисене персе пăрахас, тискеррĕн асаплантарас ĕçе тÿрремĕнех хутшăннă.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисенчен ыйтса тĕпченĕ чухне вĕсене асаплантарса тата провокаци туса, пĕлетăркаçах суя сăмахсем калаттарасшăн пулнă.

Совет гражданĕсене айăплама суя ĕçсем çырса хатĕрленĕ, çав ĕçсем тăрăх вара 100 çын таран персе вĕлернĕ.

БУЛАНОВ Михаил Петрович, Тăван çĕршыва сутса, нимĕçсем енне куçнă та гестапон Харьковри отделенине шофер пулса ĕçлеме кĕнĕ.

Вăл совет çыннисене «душегубка» текен машинăсенче чыхăнтарса вĕлерес ĕçе хутшăннă.

Мирлĕ совет гражданĕсене персе пăрахмалли вырăна турттарнă. 60 ачана персе пăрахнă çĕре тÿрремĕнех хутшăннă.

Çак ĕçпе айăпланакансем пурте, уйрăмăн илсен: **Р. Рецлав, Г. Риц, В. Лангхельд, М. П. Буланов** хăйсен айăпĕсене йышăнса, хăйсен тискер ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Çÿлерех кăтартнă ĕçсемшĕн çаксене **айăплаççĕ:**

Рецлав Рейнгард, 1907 çулта Берлин хулинче çуралнă, вăтам шкултан вĕренсе тухнă, Германин Харьковри вăрттăн ĕçлекен хирти полицин чиновникĕ, пулăшакан полицин старши ефрейторĕ.

Риц Ганс, 1919 çулта Германири Мариенверден хулинче çуралнă, нимĕç, аслă шкултан вĕренсе тухнă, национал-социалистсен партийĕн членĕнче 1937-мĕш çултанпа тăрать, СС ротин командирĕн заместителĕ, унтерштурмфюрер.

Лангхельд Вильгельм, 1891-мĕш çулта Майн çинчи Франкфурт хулинче çуралнă, нимĕç, национал-социалистсен партийĕн членĕнче 1933-мĕш çултанпа тăрать, Германи çарĕнчи çар контрразведкин офицерĕ, капитан.

Çаксене, вĕсем Германин çар çыннисем пулса, 1941—1943 çулсенче совет çыннисене ятарласа тунă «душегубка» текен автомашинăсемпе усă курса, массăллăн та тискеррĕн вĕлерсе пĕтернĕ çĕре, çавăн пекех тата совет çыннисене массăллăн персе, çакса, çунтарса вĕлерес ĕçе тÿрремĕнех хутшăннăшăн, совет çыннисене çаратнăшăн тата вĕсенчен тискеррĕн мăшкăлланăшăн айăплаççĕ, урăхла каласан, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1943 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх айăплаççĕ.

Буланов Михаил Петрович, 1917-мĕш çулта Казах ССР-чи Джанибек станцинче çуралнă, партире тăмасть, Тăван çĕршыва сутса нимĕçсем енне хăй ирĕкĕпе куçнă тата Германин карательнăй органĕсене ĕçлеме кĕнĕ.

Нимĕçсемпе пĕрле вăл совет çыннисене «душегубка» текен машинăсенче пăчăхтарса вĕлернĕ çĕре тÿрремĕнех хутшăннă. Совет çыннисене, çав шутрах ватă çынсене, хĕрарăмсене тата ачасене персе пăрахнă.

Çавсемшĕн пуриншĕн те, урăхла каласан, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1943 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх айăплаççĕ.

Çÿлте кăтартнă ĕçсемшĕн асăннă çынсене Военнăй Трибунал суд тума тивĕçлĕ.

Айăплав çырнине 1943 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче çырнă.

* * *

Судра айăпласа çырнине вуласа панă хыççăн тата ăна нимĕçле куçарса парсан, айăпланакансем пурте суд Председателĕн ыйтăвĕсем çине ответлесе [illegible]

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ял хуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1173 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.